Шишкина Алевтина Евгеньевна
вĕрентекенĕ
МБОУ "Салабайкасси ООШЁ"
Салабайкасси ялĕ, Чăваш Республики

АТĂЛÇИ ТĂРĂХĔНЧИ ВЫРĂСМАР ХАЛĂХСЕН КУЛЬТУРА АТАЛАНĂВĔН ИСТОРИЙĔНЧЕ ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ ЯКОВЛЕВĂН ВИТĔМĔ

Аннотаци: статьяра вĕрентекенĕн и.Я. Яковлевăн еткерлĕхне шкулта тĕпчессипе тата сарассипе çыхăннă педагогика опычĕпе паллаштарнă. Чăваш çырулăхĕн историйĕпе 8-мĕш класра вĕренӳ материалĕ çителĕксĕррине палăртаççĕ, хушма сведенисем явăçтарса комбинациллĕ урок сĕнеççĕ. И.Я. Яковлевăн куçару ĕçне тĕплĕн уçса параççĕ. Библи куçарнă чĕлхесен шучĕ çинчен даннăйсем илсе кăтартаççĕ, и.Я. Яковлев чăваш чĕлхипе культурине упраса хăварас ĕçе тӳпе хывни çинчен пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

Тĕп сăмахсем: И. Я. Яковлев; Н. И. Ильминский; И. Н. Ульянов; Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ; çутта кăларас ĕç; чăваш çырулăхĕ; куçару ĕçĕ-хĕлĕ; «Яковлев вулавĕсем»; тăван чĕлхе; ăс-тăнпа нравственность воспитанийĕ; регион компоненчĕ; педагогика еткерлĕхĕ.

Шишкина Алевтина Евгеньевна
учитель
МБОУ «Салабайкасинская ООШ»
д. Салабайкасы, Чувашская Республика

РОЛЬ ИВАНА ЯКОВЛЕВИЧА ЯКОВЛЕВА В ИСТОРИИ РАЗВИТИЯ КУЛЬТУРЫ НЕРУССКИХ НАРОДОВ ПОВОЛЖЬЯ

Аннотация: *в статье представлен педагогический опыт учителя, связанный с изучением и популяризацией наследия И. Я. Яковлева в школе. Отмечается недостаточность учебного материала по истории чувашской письменности в 8 классе и предлагается комбинированный урок с привлечением дополнительных сведений. Подробно раскрывается переводческая деятельность И. Я. Яковлева.*

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Приводятся данные о количестве языков, на которые была переведена Библия, и делается вывод о вкладе И. Я. Яковлева в сохранение чувашского языка и культуры.

Ключевые слова: *Яковлев И.Я., Ильминский Н.И., Ульянов И.Н., Симбирская чувашская школа, просветительство, чувашская письменность, переводческая деятельность, Яковлевские чтения, родной язык, духовно-нравственное воспитание, региональный компонент, педагогическое наследие.*

Тĕллевĕсем: 1) Атăл тăрăхĕнчи çутта кăларас ĕç аталанăвĕ çинчен ăнлантарасси;

2) Н. И. Ильминскипе И. Я. Яковлев çыхăнăвĕсем, вĕренӳ тĕллевĕсем çинчен каласси;

3) И. Я. Яковлевпа И. Н. Ульянов кил-йышĕ туслă пурăнни, вĕренӳре тата пурнăçра пĕр-пĕрне пулăшса пын çинчен пĕлтересси;

4) Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕпе, хальхи шăпипе паллаштарасси;

5) Ачасене И. Я. Яковлев пек ăслă-тăнлă, ĕçчен, хастар пулма, тăван çĕршыва, чĕлхене, халăха хисеплеме, юратма хавхалантарасси.

Ум сăмах. Мĕн хистерĕ- ши мана регионсем хушшинче иртекен III-мĕш наукăпа практика «Яковлев вулавĕсем» («Яковлевские чтения») конференцие хутшăнма? Сăлтавĕ акă мĕнре. Хам опытпа кăштах та пулин паллаштарса усăллă ĕç тунинче, пухнă тата тĕпченĕ материала çутта кăларасси. Çитĕнекен ăрăва Кăвак Çут Чаршавне уçнă Улăпăн ĕçне малалла тăсасси. Эпĕ 25 çул хушши ĕнтĕ Яковлев çулĕпе утатăп. Ку ăнсăртран тунă ĕç мар. И. Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университетне хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă. Диплом ĕçĕ те И. Я. Яковлев пурнăçĕпе пултарулăхне шкулта вĕрентесси темăпа хӳтĕленĕ. И. Я. Яковлев пурнăçĕпе пултарулăхне шкулта вĕрентесси – чи сăваплă ĕçсенчен пĕри. Паянхи куна илес пулсан эпĕ хамăн ĕç программинче И. Я. Яковлев пурнăçĕпе пултарулăхне 5, 8, 9, 10-мĕш классенче вĕрентме палăртса хунă. Пиллĕкмĕш класра И. Я. Яковлевăн «Выртмара», «Туй курма тарса кайни»

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

калавĕсем çинче чарăнса тăни. Саккăрмĕш класра И. Я. Яковлевăн пултарулăхĕпе паллаштарнин вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ. Тăххăрмĕш класра Яковлевăн пархатарлă ĕçĕсене кăтартасси. Вуннăмĕш класра И. Я. Яковлев пурнăçĕпе пултарулăхне пĕтĕмĕшле пăхса тухасси. Мĕн пур ĕçе шута илсе И. Я. Яковлевпа çыхăннă шкул тата класс тулашĕнчи ĕçсем туса ирттересси пысăк вырăн йышăнать. Ман шутпа, çак ĕçсем те çитĕнекен ăрăва пысăк витĕм парасса шанас килет. Тĕслĕхрен: «Тавах чăваш Улăпне» литература каçĕн сценарийĕ, «И. Я. Яковлев» тест, «Çăлтăрлă сехет» вăйă сценарийĕ, И. Я. Яковлев калавĕ тăрăх йĕркеленĕ инсценировка «Ыйткалакансем».

Шел пулин те, 8-мĕш класра учебникри материал урок ирттерме çителĕксĕр. Уйрăмах чăваш çырулăхĕ мĕнле пуçланса кайни çинчен материал пачах çук. Çавна шута илсе, урок ачасемшĕн пурнăçра усăллă пултăр тесе эпĕ çителĕклĕ материал пухма тăрăшрăм. Учебникри материала курса ку урока кӳртĕм урок теме юрать. Тытăмне пăхсан çĕнĕ темăна ăнлантармалли урок. Урок меслечĕсемпе мелĕсене кура-лекци урок. 9-мĕш класра «Çĕнĕ çырулăх пуçламăшĕнчи чăваш литератури» темăна вĕрентнĕ чух кӳртĕм урокра И. Я. Яковлевăн пархатарлă ĕçĕсене палăртса хăвармалла. Çавăнпа та кунта XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш литературине аталанма, 1861çулта Раççейре крепостла йĕркесене пăрахăçа кăларнă хыççăн тин тапранма пултарни, çĕнĕ çырулăх çураласси те, шкулсем уçăласси те, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн ĕçĕ-хĕлĕ те çавăнпах çыхăнни çинчен каламалла.

1870-мĕш çулта вырăс мар халăх ачисене шкулта тăван чĕлхепе кăштах вĕрентме ирĕк парançи пулни, çав шутрах правительство ачасем патшапа турра хирĕç каясран хăраса шкулсене чиркӳ кĕнекисемпе тултарни çинчен те палăртмалла. Унтан тăван чĕлхепе усă курни литературăна аталанма çĕнĕ вăй пани, алфавит çурални, çĕнĕ çырулăх пуçланни, ăна пуçараканĕ чаплă шухăшлавçă Иван Яковлевич Яковлев пулни çинчен асăнса хăĕвармалла. Яковлевăн ĕçĕ-хĕлĕ çамрăксемшĕн куçарупа литература пултарулăхĕн шкулĕ çинчен тĕплĕн чарăнса тăмалла. Акă, тĕслĕхрен, И. Я Яковлев-çыравçă, куçаруçă. И. Я. Яковлев литературăпа çамрăклах кăсăкланнă. 1867–1870-мĕш çулсенче

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

статьясемпе рецензисем, сăвăсем çырнă. Çавăн пекех И. Я. Яковлев шкулта вĕренмелли кĕнекесем кăларнă, халăх сăвви-юррисене, юмах-халапĕсене пухнă, ача-пăча валли кĕске калавсем çырнă, вырăсларан чăвашла куçарнă. Иван Яковлевич Яковлевăн куçару ĕçĕ-хĕлĕ чи малтан -тĕн литературипе çыхăннă. Халĕ ĕнтĕ, çĕршыв пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртекен тапхăрта ку ыйтупа уççăн калаçу пуçлама вăхăт çитрĕ. Чи малтанах И. Я. Яковлев Турă законĕнчи вунă заповеде чăвашла куçарнă, ăна 1871 çулта тухнă «Чăваш ачисенге çырăва вĕренмелли кĕнекере» пичетлесе кăларнă. Çакăн хыççăн вăл тĕн кĕнекисене куçарас енĕпе пĕр канми хĕмленсе ĕçленĕ. Иисус Христос Турă хунă çĕнĕ Сăмах кĕнекисене, уйрăммăн-уйрăммăн чăвашла куçарса, Хусанти Гурий святитель тăванлăхĕ çумĕнче ĕçленĕ куçару комиссийĕ урлă пичетлесе пынă. 1873 çулта Матфей çырнă Евангелие, 1874 çулта Маркпа Лука çырнă Евангелисене çаптарса кăларнă.

И. Я. Яковлев куçарнă Евангелисене А. Шифнер академика пăхса тухма панă. А. Шифнер тĕрĕсленĕ хыççăн «чăвашла куçарнă Евангелисем питех те ăнăçлă пулса тухни пирки ырласа çырнă отчёт» тăратнă.

1874 çулта Вильям Никольсон Хусанта И. Я. Яковлевпа хăйĕнпе тĕл пулнă. «Эпĕ çав тери кăмăллă та йĕркеллĕ çамрăк çынпа, И. Я. Яковлевпа паллашрăм. Вăл сăваплă çырусене тата ытти тĕн кĕнекисене тăван чăлхен-чăвашла-куçарас енĕпе чăн-чăн христианла филантроп пек хытă тăрăшса ĕçлет-çырса хăварнă В. Никольсон хăйĕн кун кĕнекинче».

1875 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче И. Я. Яковлева Хусан вĕрентӳ округĕн чăваш шкулĕсен инспекторне лартнă. Шăп çавăн чухне Гурий Святителĕн тăванлăх канашĕ ăна, Н. И. Ильминский сĕннипе, Сăваплă çырусене тата тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă ытти литературăна чăвашла куçарас ĕçе йĕркелесе, ертсе пыма хушнă. Шаннă тивĕçе тӳрре кăларма тăрăшса, И. Я. Яковлев кунне-çĕрне пĕлмесĕр куçару ĕçĕпе ларать. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлекенсемпе вĕренекенсене те пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çак ĕçе хутшăнтарать.

Куçарнă кĕнекесене Чĕмпĕрти монографире тата Хусан университечĕн типографийĕнче çаптарнă.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çапла майпа, тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене чăвашла куçарас ĕç пĕртте чарăнса тăман. Иван Яковлева ку ĕçре Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн учителĕсем А. П. Петров, Т. Ф. Филимонов, П. В. Васильев нумай пулăшнă. Çапла тăрăшса 1882 çулта- «Атăл праздникĕсем», 1882 çулта- «Кĕлĕсем», 1885 çулта- «Мăн кун кĕллисем» ятлă кĕнекесем çаптарса кăларнă.

Çапла вара, Çĕнĕ Сăмахăн тата тепĕр 23 кĕнекине куçармалла пулнă. Асăннă кĕнекен ум сăмахĕнче Иван Яковлевич Яковлев Библин Çĕнĕ Сăмахне пĕтĕмпех чăвашла куçарса кăларас тесе 40 çул хушши тăрăшни çинчен çырса хăварнă. Ку çеç те мар, çав хушăрах И. Я. Яковлев Кивĕ Сăмаха та (Ветхий Завет) куçарма пуçланă. Çак кĕнеке Çĕнĕ Сăмахран 3 хут пысăкрах, унта пурĕ 39 кĕнеке пулнă. 1897 çулта çак кĕнекене Яковлев куçарса пĕтернĕ. Ăна 1900 çулта уйрăммăн çаптарса кăларнă.

Çакна татăклăн каласа хăвармалла: 1993 çул вĕçнелле тĕнчери Библие 2062 чĕлхепе куçарса, пичетлесе кăларнă. Çав шутрах пĕтĕм Библие йăлтах-337 чĕлхепе, Çĕнĕ Сăмаха-799 чĕлхепе тата уйрăм кĕнекесене 326 чĕлхепе пичетлесе кăларнă.

И. Я. Яковлев ĕçленĕ чухне Библие вара 299 чĕлхене пичетлесе кăларнă пулнă. Пирĕн аслă вĕрентекенĕмĕр ĕмĕр тăршшĕпех чăваш халăхне çутта кăларассишĕн тăрăшнă. И. Я. Яковлев чăвашла куçарнă Евангели, Кивĕ Сăмахăн уйрăм кĕнекисем Библин куçарăвĕсем 300-е яхăн çитнине кăтартса параççĕ. Çапла вара, чăваш чĕлхи тĕнчери пуян чĕлхесен шутне кĕнĕ. И. Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем чăн кăмăлтан, ниме хапсăнмасăр, мĕн пур халĕпе тăрăшнине пула малашлăхсăр тата чухăн тесе тиркенĕ чăваш чĕлхи хăйĕн халăхне цивилизаци тĕнчине илсе тухнă.

Калас пулать, халăхăн пурнăçĕпе шухăшлавĕ аслă просветителĕн мĕнпур произведенийĕсене, çав шутрах букварĕсене те витерсе тăрать. Темăна çирĕплетнĕ хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума юрать: кирек мĕнле халăхăн та культура чăннипех аталанса каясси çырулăх пуçланнипе çыхăнса тăрать. Çырулăха çеç халăхăн ĕмĕрхи ăс-тăн пуянлăхне упраса хăварма пулать, çырулăха пула çеç халăх тепĕр халăхăн культурипе анлăн паллашма пултарать.

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Чăваш культурине пуçарса яраканĕ, чăваш культурин аслашшĕ Иван Яковлевич Яковлев пулса тăрать. Кун пек хисеплĕ ята вăл хăйĕн калама çук чаплă ĕçĕсемпе тивĕçлĕ. Çак чаплă ĕçсенчен пĕри- чăваш çырулăхне туса хуни. Халăх асĕнче чăваш халăхне çутта кăлараканăн ячĕ ĕмĕр упранĕ. И. Я. Яковлев пулман пулсан чăваш халăхĕ пачах е сахалланса юлма пултарнă. Вăл тăван халăха, унăн чĕлхине упраса хăварнă.

Список литературы

1. Волков, Г. Н. Жизнь и смерть. Семья и школа. Истина и вера : о просветителе чувашского народа И. Я. Яковлеве / Г. Н. Волков. – Чебоксары : Руссика, 2002. – 220 с.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)